Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

90 (7515) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи октябрĕн (юпа) 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Ыран – Автомобиль транспорчĕпе ĕçлекенсен кунĕ**

## Туслă коллектив мал туртăмлă ĕçлет



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан водительсем – “Свобода” хуçалăх экономикине тивĕçлĕ тӳпе хывакансем. Кашниех тăван хуçалăхра 20 çул ытла вăй хурать. “Çур акирен пуçласа хура кĕрчченех водительсем хĕрӳ ĕçре. Андрей Алжиров, Геннадий Быков, Виталий Якимов, Сергей Алжиров, Виталий Степанов водительсем хуçалăх ĕçченĕсемшĕн те ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Май килнипе вĕсене тата ытти водительсене те хăйсен професиллĕ уявĕпе саламлатăп, хуçалăх аталанăвĕшĕн ытларах тонна-километр ĕç тума такăр çул, çирĕп сывлăх сунатăп”, – терĕ хăйĕнчен сулахаялла тăракан водительсене ĕçшĕн чысласа 20 çула яхăн хуçалăхăн автомеханикĕнче ĕçлекен Леонид Михайлович Чаплин. 1965 çултанпа кăçалччен водительте ĕçленĕ Виталий Леонтьевич Якимов (сулахайран 4-мĕшĕ) – паян хуçалăхри водительсемшĕн хăйне евĕр аксакал. Унăн асăрхаттарăвĕсене паян ĕçлекен водительсем яланах асра тытаççĕ.*

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

**Кашни яла – çĕнĕ çул**

## Çĕнĕ çул пурнăçа çĕнетме пулăштăр

**Ытти çулсенче районта Тыр-пул уявĕ иртнĕ чух Чуманкасси тăрăхĕнче пурăнакансен те çак кун район центрĕнче иртетчĕ. Уй-хир ĕçĕсене пухса кĕртнĕ хыççăн çынсемпе пĕрле савăнмасăр епле-ха. Иртнĕ шăмат кун вара Апаш тăрăхĕсем ирхи автобуспах Муркаша васкамарĕç. Ара, килте хăна-вĕрле пуçтарнă чух ăçта тухса каяс? Хыт савăннипе Чуманкассине çитекен асфальт çула ял уявĕ йĕркелесех уçма шутларĕç. Миçе çул кĕтнĕ те-ха вĕсем çак куна. Савăннипе пĕрлех хытах хумханчĕç хăйсем. Çак паллă кунпа саламлама вĕсене Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров хăй килмелле. Пысăк хăнана кĕтсе илме ватти-вĕтти йышлăн пуçтарăнчĕ çав кун. Урамра çул уçнă çĕрте кĕр мăнтăрĕпе тулли сĕтел йăтăнса ларать. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн Л.Г. Ковалеван пăлханăвĕ вара Николай Васильевича хăйне сăмах панă хыççăн çеç кăшт иртме пуçларĕ.**

**Унччен вара Людмила Германовна хăйсем мĕн тери савăннине çапла пĕлтерчĕ:**

– Ĕнер эпир Чуманкассинчи Культура çуртне çут çанталăк газĕ кĕртрĕмĕр. Паян пирĕншĕн историе кĕрсе юлмалли паллă кун. Апаш тăрăхĕнче пурăнакансен вуншар çул ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Тавах Сире, Николай Васильевич, çакнашкал ăслă Указ кăларнăшăн, – чун-чĕререн тав турĕ Людмила Германовна Президента.

Сăмаха вăхăтлăха татса, çакна каласа хăварни вырăнлă пулĕ. Чуманкасси ялĕ патне çакнашкал чаплă çул тăвас шухăш вара Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров Чăваш Республикинче автомобиль çулĕсене туса пĕтерессине хăвăртлатмалли мерăсем çинчен калакан Указне кăлариччен чылай маларахах çуралчĕ. Тĕрĕсрех каласан, ку тăрăхра пурăнакансем хăйсен пĕр тĕллевлĕхĕпе çĕнсе илчĕç çак парнене. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне суйланă чух иртнĕ çул Чуманкасси тăрăхĕнче пурăнакансем “Единая Россия” партишĕн суйлава хутшăннисенчен 78 процент чухлĕн сасăларĕç. Чăваш Республикин Президенчĕ ун чухне республикăри çакнашкал пысăк кăтартуллă ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене пуçтарсан Л.Г. Ковалеваран çапла ыйтрĕ:

**– Мĕнле ыйтăва чи малтан татса парасшăн эсир?**

– Чуманкасси ялĕ патне çул тумалла, – нумай шухăшласа тăмасăр ку тăрăхри халăхăн чун ыратăвне пĕлтерчĕ Людмила Германовна.

– Сирĕн ял тăрăхĕн пуçлăхĕн пăлханăвне эпĕ питĕ лайăх ăнланатăп. Эпĕ хам та пĕчĕк чăваш ялĕнче çуралнă. Ача чухне пылчăк нумай çăрнă. Шкула çитме 2-3 çырма урлă каçмаллаччĕ. Тепĕр чух çуркунне-кĕркунне шкула çитейменни те пулнă, – терĕ Николай Васильевич. – Çавăнпа та çак пысăках мар яла çул тунин пĕлтерĕшĕ сирĕншĕн мĕн тери пысăккине эпĕ лайăх пĕлетĕп.

Н.В. Федоров икĕ çул хушшинче Чăваш Республикинчи çулсене туса пĕтерме 9 миллиард тенкĕ тупма пултарни тата пур çулсене тĕплĕн юсама тапĕр 5 миллиард тенкĕ килсе çитмелли пирки каларĕ.

– 14 миллиард тенкĕ Чăваш Республикишĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çул-йĕр тумалли çакнашкал программа Раççей Федерацийĕнче урăх ниçта та çук, – палăртрĕ Николай Васильевич. – Çакă йăлтах эсир – ял ĕçченĕсем пуррипе, эпир пĕр-пĕрне ăнланнипе, пĕр-пĕрне пулăшнипе пулса пырать. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В.В. Путин та Чăваш Республикине килсен, çулсене курсан, питĕ тĕлĕнчĕ.

Николай Васильевич малалла çакна палăртрĕ: Раççей Федерацийĕнче икĕ регион – Тутарстанпа Чăваш Республики – 2005 çулччен пĕтĕм яла çут çанталăк газĕ кĕртсе пĕтерчĕç. Раççейре урăх кун пекки çук.

– Ăнланмалла, Тутарстан нефтьпе пуян. Пĕр нефте кăна вăл, хакĕпе илсен, Чăваш Республикинчи пĕтĕм промышленность тата ял хуçалăх предприятийĕсем туса кăларакан мĕн пур продукциренен 4 хут ытла сутать. Апла пулин те эпир Тутарстанпа конкуренцире çирĕп тытăнса тăма пултаратпăр. Ку çеç те мар, çурт-йĕр тăвассипе те Чăваш Республикинче пĕр çын пуçне Тутар Республикинчен 40 процент ытларах çурт тăватпăр, – малалла тăсрĕ хăйĕн сăмахне Президент. – Паян вара эпир Чăваш Республикинче кашни кун пĕр е ик ял патне асфальт çул уçатпăр. Кун пекки республика историйĕнче халиччен пулман. Çулсем питĕ кирлĕ. Машинăсемпе çӳреме çеç мар. Хамăршăн та. Çитет атăпа пылчăк çăрса. Халь ĕнтĕ туфли-ботинкăпах шаклаттарса çӳреме пулать кунта. Çул вăл питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çын пек пурăнас килет пирĕн кашнинех. Кунсăр пуçне çул пурри ĕçшĕн те питĕ лайăх, питĕ кирлĕ. Ялта газ, çул, шыв пурри район влаçне яла инвестици илсе килес ĕçе çăмăллатма пулăшать, экономикăна çирĕплетме май парать.

Николай Васильевич Чуманкасси тăрăхĕсене çул уçнă ятпа саламларĕ, çирĕп сывлăх, лайăх кăмăл (“Çакна валли сирĕн паян сăлтав пур”, – терĕ), ваттисене те, çамрăксене те юрату сунчĕ.

– Чи лайăх парне вăл сире – çул тата эсир юрра-ташша ăста пулнине шута илсе музыка центрĕ парнелетĕп, – терĕ.

Унтан пуçтарăннисене пурне те район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ.

– Малашне те республика Президенчĕ пулăшса пынипе татах та хавхаланса ĕçлемелле пултăр. Ĕçлемелли, тумалли вара пирĕн питĕ нумай. Çавăнпа та çитĕннисене ĕçре, ачасене вĕренӳре, ветерансене çитĕнекен ăрăва воспитани парассинче ăнăçу сунатăп, – терĕ.

Юрий Александрович Николай Васильевича тав турĕ:

– Сире халăх ăнланăвĕ сунатăп, пирĕнтен те пулăшу пултăр яланах, – терĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**





**АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професиллĕ уявпа саламлатăп! Паян пирĕн пурнăçа автотранспорт комплексĕсĕр кăтартма та çук. Вăл Чăваш Республикин социаллă-экономика аталанăвне пысăк тӳпе хывать. Сирĕн канăçа çухатнă ĕçĕр Чăваш Ен предприятийĕсене Раççейăн ытти регионĕсемпе, ют çĕршывсемпе çывăх çыхăну тытса аталанма май парать, пассажирсене вырăнтан вырăна вăхăтра куçарать.

Республикăра автомобилизаци хăвăрт аталанать. Юлашки 10 çулта кăна çынсен харпăрлăхĕнчи автомашинăсен хисепĕ 10 хут ытла ӳсрĕ. Ку вăл çынсен пурнăç шайĕ çĕнĕ шая çĕкленнине çирĕплетет. Çакă влаç органĕсем умне те пысăк калăпăшлă задачăсем лартать. 2008 çулта халăх пурăнакан пур ялсемпе хуласем те хăйсем хушшинче асфальт çулпа çыхăнса Раççейри çакнашкал пĕрремĕш регион пулса тăрĕ. Çавна шута хурса çĕнĕ автомобиль маршручĕсем уçăлĕç, хуласенчи транспорт инфраструктури тĕпрен улшăнĕ.

Сирĕн ĕç пассажирсен тата çуран çӳрекенсен пурнăçĕ умне хăрушлăх кăларса тăратассипе те çыхăннă. Анчах Сирĕн професионализмпа асăрханулăх ăнăçлă ĕç никĕсĕ пулса тăрать.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, аварисемсĕр ĕç, лайăх кăмăл сунатăп. Телей пултăр Сирĕн çемйĕрсенче!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

**АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире хăвăрăн професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Районăн социаллă тата экономика аталанăвĕнче сирĕн тӳпе çителĕклех. Предприятисемпе организацисен ĕçĕ-хĕлĕ сирĕн кулленхи тăрăшуллă ĕçĕрпе çыхăннă. Ял хуçалăх продукцине турттаратăр-и е урăх отрасльте ĕçлетĕр – хăвăрăн тивĕçĕре вăхăтра пурнăçлама тăрăшатăр. Професионализм, тимлĕх пирки пĕр самантлăха та манмастăр. Хăвăрăн йăнăшма юраманнине, ĕçĕр вуншар, çĕршер çын пурнăçĕпе çыхăннине асрах тытатăр. Чылай чухне кăткăс условисенче вăй хуратăр. Тавах сире çăмăл мар пархатарлă ĕçĕршĕн.

Водительшĕн чи пахи вăл - çул такăр пулни. Малашне ку тĕлĕшпе условисем татах та лайăхланаççĕ, çак 2 çул хушшинче районти кашни ял патне йĕркеллĕ çул пулĕ. Ку вара çул çинче хăрушлăха чакарма май парать, автотранспортпа усă курассин шанчăклăхне палăрмаллах ӳстерет.

Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласса шанас килет. Пурнăçра çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳ сунатăп. Çулăр сирĕн яланах телейлĕ те такăр пултăр, килте çывăх çынсем кĕтни вăй-хал патăр, инкек-синкек сирĕн çывăхăра та ан пытăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Депутатсен районти Пухăвĕ**

## Ларура 10 ыйту пăхса тухрĕç

Кĕçнерни кун район администрацийĕн ларусен залĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 21 ларăвĕ иртрĕ.

Малтанхи икĕ ыйтупа депутатсен районти Пухăвĕн район Уставне хушăмсемпе улшăнусем кĕртесси çинчен тата районăн 2008 çулхи бюджечĕ çинчен калакан йышăнусен проекчĕсене халăхпа сӳтсе явассине тишкерчĕç.

Депутатсем çавăн пекех 2006 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчи ларура тунă йышăнăва улшăнусем кĕртрĕç. Çитес çул Республика кунне пирĕн районта ирттерес ыйтăва тишкерчĕç. Пăхса тухнă ытти ыйтусемпе те тивĕçлĕ йышăнусем турĕç.

Лару ĕçне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. Г. Данилов, предприятисемпе организацисен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, район администрацийĕн пай пуçлăхĕсем хутшăнчĕç. **Л. ПАВЛОВА.**

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*

Хамăрăн хисеплĕ те юратнă мăшăра, пархатарлă аттене, пиччене, шăллăма, хуньстарике, хăтана тата тăванăмăра – Муркашри кирпĕч заводĕнче ĕçлесе пенси тухнă, халĕ Шупуç ялĕнче пурăнакан **Александр Ильич ЖИРНОВА** октябрĕн 30-мĕшĕнче 70 çул тултарнă ятпа тата ноябрĕн 7-мĕшĕнче çемье çавăрнăранпа 41 çул çитнĕ май чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.

Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, сывлăхпа телей, ăнăçу, çывăх тăванусен юратăвĕ, мăнукусен хаваслă кулли санăн пурнăç çулне вăй парса тăччăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, аппăшĕ, шăллĕ, йăмăкĕ, ывăлĕсемпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 3 мăнукĕ, хăти, çывăх тăванĕсем.**



Юратнă аттепе аннене – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Валентина Захаровнапа Петр Николаевич КУРБАНОВСЕНЕ** – çума-çумăн тăрса пĕрле утма пуçланăранпа 50 çул çитнĕ ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Эсир пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсир пурте – пирĕн телей, чун ăшши. Сире эпир çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр, çĕре çити пуç таятпăр.

**Пĕтĕм чун-чĕререн саламлаканĕсем виçĕ ывăлĕпе кинĕсем, виçĕ хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, вун икĕ мăнукĕ.**

Юнкăпуç ялĕнче пурăнакан юратнă аннене, асаннене, кукамая – **Раиса Лукинична ЯНДИМИРКИНАНА** октябрĕн 25-мĕшĕнче 70 çул тултарнă ятпа чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр, ватлăху канлĕ пултăр. Пирĕншĕн яланах эсир ырă кăмăллă пулнă, малалла та çаплах пулăр.



Çулсем иртеççĕ сисĕнми
Кирлех-ши уншăн кулянма?
Вăй-халăр пултăр иксĕлми,
100 çул сунатпăр пурăнма.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**